

# Сехет

Василий ДАВЫДОВ

Пирӗн аттен кӗсъене чиксе ҫӳремелли сехет пур. Вӑл ӑна часчасах кӑларса пӑхать, вӑхӑт мӗн чулне тӗрӗслет.

Пӗр ирхине пӗчӗк шӑллӑм Саша атте патне пычӗ те:

— Мана та сехет илсе пар,— тесе йӑлӑнма пуҫларӗ.

— Эсӗ, пӗчӗкскер, сехетпе мӗн тӑватӑн?—ыйтрӗ унран атте.

— Вӑхӑт пӗлме. Эпӗ те кашни ирех ача садне каятӑп-ҫке,—терӗ Саша.

— Сана аннӳ ӑсатса ярать. Эс кая юлас ҫук, ан кулян,—терӗ ӑна атте. Кун пек калани Сашӑна килӗшмерӗ пулас, вӑл кӳренчӗ, макӑрма пуҫларӗ. Атте Сашӑна, ҫавӑн пек йӑлӑнтарса йӗнӗшӗн, ятласа та пӑхрӗ. Анчах Саша ун сӑмахне итлесшӗн те пулмарӗ, мӗн ача садне тухса кайиччен макӑрчӗ.

* * *

Эпир каҫхине пурте ӗҫрен таврӑнтӑмӑр. Саша та ача садӗнчен килчӗ. Вӑл питӗ савӑнӑҫлӑ, пӳрте кӗнӗ-кӗменех:

— Тупрӑм! Тупрӑм! Сехет!—тесе кӑшкӑрса ячӗ. Эпир пурте тӗлӗнсе кайрӑмӑр.

— Мӗнле сехет, кам пачӗ? — ыйтрӑмӑр унран.

Чӑнах та, Саша кӗсйинчен кӗмӗл вӑчӑраллӑ сехет кӑларчӗ те:

— Акӑ, курӑр,—терӗ.

Эпир ӑна хупӑрласа илтӗмӗр, ӑҫтан тупнине ыйтса тӗпчеме пуҫларӑмӑр. Вӑл ӑна ачасемпе пӗрле ҫаран ҫине чечек пухма кайсан тупнӑ иккен.

— Эй, атьсемӗр, ку хамӑр касра пурӑнакан Иван Сергеевич сехечӗ-ҫке!—терӗ атте тӗлӗнсе. Вӑл ҫавӑнтах ман еннелле ҫаврӑнчӗ те:

— Вӗҫтер... Иван Сергеевич халех кунта килтӗр,—терӗ.

Иван Сергеевич часах пирӗн пата ҫитрӗ.

— Мӗнле пурӑнатӑр?—ыйтрӗ атте унран.

Иван Сергеевич вӑрӑммӑн сывласа илчӗ те: «Инкек куҫа курӑнса килмест ҫав, сехете ҫухатрӑм»,—терӗ.

Паян иртенпех вӑл колхоз ҫаранӗ ҫинче утӑ ҫулнӑ иккен. Кӑнтӑрла, каннӑ вӑхӑтра, сехетне йывӑҫ турачӗ ҫине ҫакса хунине мансах кайнӑ-мӗн.

— Шырарӑм-шырарӑм, тупаймарӑм,— терӗ Иван Сергеевич. Вӑл тата тем каласшӑн пулчӗ, анчах ӑна Саша пӳлсе хучӗ.

— Эпӗ... ҫаран ҫинче... чечек... тупрӑм!—тесе кӑшкӑрса ячӗ хӑй. Саша кӗсйинчен кӗмӗл вӑчӑраллӑ сехет кӑларчӗ те Иван Сергеевич патне пырса: «Акӑ вӑл, илӗр»,—терӗ. Иван Сергеевич, сехете курсан, хӗпӗртесе ӳкрӗ. Вӑл Сашӑна ыталаса илчӗ те:

— Эх, эсӗ маттур та иккен,—терӗ.

Тепӗр кунне Иван Сергеевич пирӗн пата вылямалли сехет илсе пычӗ.

— Кӑна ӗнтӗ Сашӑна парнелетӗп. Лайӑх ача вӑл,—терӗ те, сехете Сашӑн сулахай аллине ҫыхса ячӗ.